## Чăваш халăх поэчĕ Александр АЛКА çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май

# АЛКА - САЛТАК, АЛКА - ПОЭТ



## Аслă ăру юрăçне

*Ку сăвва Александр Алка поэт çуралнăранпа 85 çул çитнĕ ятпа çырнă.*

**Кĕпер те эс хывнă тет пăрлă шывра-**
**«ула уй-хирте урнă тупă улать».**
**Çилпе, пульăпа шăхăран пурнăçра**
**Салтак уттипе такăрлатрăн çулна.**
**Укçашăн, яватчĕ чуна пилсĕрри**
**Сухаллă кантра пек йăмшак шухăшне.**
**Тӳре пек поэт ал сулса ирттĕр–и?**
**«Каларăмăр: «Хăшĕ-хăшне!»**
**Сăнарлă ӳкерчĕк, хитре кĕлетке**
**курсан эс ырлаттăн чун кĕнĕ сăвва.**
**«Эппин, малашне те пулсам Теветкел!» -**
**каларăн татса пĕринче эс йăваш,**
**Пĕр вĕçкĕн ырларĕ ют çĕр сывлăшне,**
**Ятна лутăркарĕ:**
**«Алка – поэт мар!»**

**Ăс хĕçĕ йăл! çиçрĕ пек:**
**«Хăшĕ-хăшне!»**
**Чăваш кĕввисемшĕн те алтăр тытар!**
**Чăвашăн ăс-халĕ шыва та çĕре**
**е янкăр тӳпе сывлăшне те мансан**
**Мĕн калĕ йăх-несĕл çитес тĕнчере!**
**Кам пулĕ чăваш хăй сăнне çухатсан?**
**Юравлă чăваш та тĕнче анлăшне**
**курма пăрахать-и пахчаç кусĕпе?**
**Алка пек каласшăн эп:**
**«Хăшĕ-хăшне!»**
**Выртса канашласшăн çĕрпе, хĕвелпе.**

***Николай ТЕВЕТКЕЛ.***
***01.01.98 ç.***

Вăхăтăн тĕлĕнмелле хăвăртлăхĕ тĕрлĕрен пысăк пулăмсене çиçĕм саманчĕ пек йăлкăштарса иртет темелле. Акă эпир те – вăрçă ачисем – кукамайсем те кукаçисем, асаннесем те асаттесем пулса тăтăмăр. Çамрăклăх урама çеç тăрса юлнă темелле. «Кăшкăр, чĕн апла пулсан!» Сасă памĕ вăл. Анчах астăвăм кирек мĕнле çыравçă чунĕнче те хăйĕн сассине памалла пек туйăнать. Вăрçă тамăкĕнче утса тухнă салтак вара – енчен те вăл тата пысăк шухăш–кăмăллă поэт пулсан! – хăйĕн астăвăмне лирăпа кĕвĕлет:

Пĕрре, тискер çапăçуран тухсан,
Эп тĕкĕр витĕр пăхрăм та хама –
тĕлĕннипе–çке, пуçăма ухса,
вăрттăн аса илтĕм çамрăклăхăма.

...Мĕнпе вăл улшăннă? Ĕлĕк чухне
кăшт вăтансан хĕрелекен сăн–пит
çухатнă халĕ йăл тасалăхне:
салху йĕрсем унта нумай–çке пит!..

...Вĕçеççĕ пурпĕр ĕмĕт–çунатсем
иркӳлĕм шăпчăк юрлакан çĕре,
çил–тăвăлра пăрланнă сăмахсем
пĕр саншăн ăшăнаççĕ чĕрере.

*1945 ç.*

Çак йĕркесене эпĕ Александр Алкан 1947 çулта пичетленсе тухнă «Тăвата çулталăк» кĕне–

кинчен илтӗм. Александр Алка – совет ҫарӗн офицерӗ – Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫлансанах вут-ҫулӑмпа кӗлленнӗ ял-хула витӗр, «урнӑ тупӑ улакан уй-хир» урлӑ салтак уттипе утса тухать. Польша, Австри, Германи ҫӗрӗсенче вилӗмпе куҫа-куҫӑн тӗл пулать. Тӑватӑ хутчен аманать вӑл.

Ула уй-хирте урнӑ тупӑ улать,
уяр тӳпере ҫухӑрать эсрел кайӑк.
Эпир юратса тӑнӑ лапкӑ хула
вутра ялкӑшать-ҫке.
Мӗнре-ши ун айӑп?

*Курск, 1943 ҫул.*

Акӑ мӗнле янӑраҫҫӗ чун-чӗре тӳсӗмӗпе ҫуралнӑ сӑнарлӑ йӗркесем! Сӑввӑн икӗ йӗрки вӑрҫӑн хӑрушӑ ӳкерчӗкне уҫса кӑтартать пулсан, юлашки икӗ йӗркере шелсӗррӗн ҫунтарса янӑ хула шӑпишӗн кулянса тӑракан ҫын сӑнарӗ сиксе тухать. Этемлӗхӗн хура вӑйӗсем кил вучахне епле сӳнтерсе лартма пултарни шухӑшлаттарать ӑна.

Александр Алка сӑввисенче хаярлӑх та, йӑвашлӑх та ылмашса тӑнине туйса илме пулать. Ҫук, сивӗнмест иккен вӑрҫӑн вӗри кӗлӗпе пӑчӑхса-пиҫӗхленсе кайнӑ кӑмӑл. Вӑл лӑпкӑлӑх ҫыранне шырать. Самантлӑха пулин те.

Ас тӑватӑп: ҫил вӑшӑл та вӑшӑлччӗ,
Вӑштӑр-вӑштӑр шавлатчӗ вӑрман.
Сывлӑш савӑшнӑ кӑмӑл пек ӑшӑччӗ,
Вӑранайнӑччӗ ҫӗр ыйхӑран.

*Вена, 1945 ҫул.*

Пӑрлӑ шыври тӑрса ҫарсене каҫмалли кӗперсем, понтонсем хатӗрлекен Александр Алка сапер, Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑн мухтавлӑ чӑваш салтакӗ, вӑрҫӑн хӑрушӑ ӳкерчӗкӗсене акӑ мӗнешкел йӗркесемпе сӑнарласа парать:

...Хам ывӑннӑ куҫӑмсемпе шыратӑп
Ҫапӑҫура ҫухалнӑ тусӑма.
Уй варринче ҫынсем ӳкейнӗ юлнӑ...
Пӗр шурлӑхри лапамлӑ пусӑра
Выртаҫҫӗ пылчӑклӑ, тӑпраллӑ, юнлӑ,
Урасӑр, алсӑр е пуҫсӑрах.

Тӳррипе каласан вара ҫакнашкал хӑрушла сӑнсене кӑтартса пама шикленетчӗҫ 40–50-мӗш ҫулсенчи чӑваш сӑвӑҫӗсем. Кунашкал вӑрҫӑ ӳкерчӗкӗсене эпӗ каярахпа – Хӗвеланӑҫ Европӑри чаплӑ поэтсене Артюр Рембона, Редьярд Киплинга тата ыттисен сӑввисене вуланӑ хыҫҫӑн ҫеҫ курма пултартӑм. Александр Алкан хӑюлӑхӗ пулнӑ ку. Салтак пурнӑҫӗ ҫинчен халӗ те канфетла-мармеладла пылак чӗлхепе ҫыракансем пур-ха.

Снарядсем ҫурӑлнипе юпаланса ҫӗкленекен шыв ҫине тӑракан чӑваш поэчӗ – Александр Алка сапер – тӑван поэзи вӑрманне нумай-нумай сӑвӑ-поэма хунавне лартса хӑварнине нумайӑшӗ пӗлет. Анчах унӑн гражданла лирикине чылайӑшӗ манса кайнӑ ӗнтӗ. Эпир – вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ӳсӗм – Александр Алка ҫырнӑ «Июнӗн 22-мӗш кунӗ» сӑвва шкулта пӑхмасӑр вӗренеттӗмӗр:

Эпир – ирӗк халӑх, пӗр харӑс тӑрса
Кӗретпӗр вут-ҫулӑм айне.
Эпир пӗрре мар вӑрҫса курнӑ вӑрҫа,
Ак курӑпӑр: хӑшӗ-хӑшне!

Юлашки ҫулсенче культ тапхӑрӗнче инкеке лекнӗ ҫыравҫӑсем ҫинчен нумай ҫыраҫҫӗ. Хӑшӗ-пӗри роман та «калӑплать» тата! Александр Алка ҫинчен ҫырнӑ биографиллӗ йӗркесене вулатӑп та шалтах аптраса ӳкетӗп хӑшпӗр чухне. Ара, ҫапӑҫу хирӗнче самантсерен вилӗм ҫави касса антарма пултарнӑ ҫыравҫӑсен шӑпи те ҫӑтмах тӗнчи пулман-ҫке! Ҫакна аса илсех тенӗ пек, – Чӑваш халӑх поэчӗ Александр Алка, – ҫапла хуравлать: «Бранденбург хапхи умӗнче» /Алка сӑввин ячӗпе вӗҫлетӗп шухӑша/.

...Нумай уй-хирсем тӑрӑх утрӑмӑр,
шурӑмӑр,
Шари! ҫухӑрса вӗҫекен вут-хӗм айӗн,
Тӑшман йӑвине ҫывхарасчӗ тесе.
Тӑватӑ ҫулта, тен, ҫухалчӗ-тӗр ҫур ӗмӗр
Сӗм вилӗм умне тарӑхса тухнӑ майӑн
Ҫӗр сӑнӗ ҫапатчӗ ҫамрӑк тесе.

*Берлин, 1945 ҫул.*

Шел те, пирӗн чаплӑ тӗпчевҫӗсем Аслӑ вӑрҫӑ вутӗнчен ҫунса тухнӑ ҫыравҫӑсене – паттӑр чӑваш салтакӗсене хуллен-хуллен манса кайма тытӑннӑ пек туйӑнать. Александр Алка вара чӑннипех те паттӑр салтак пулнӑ. Унӑн тӑватӑ орденӗ тата темиҫе медалӗ ҫакӑн ҫинчен евитлеҫҫӗ. Тата ҫакӑн ҫинчен те каласа хӑварас килет: Александр Алка ирттерекен пултарулӑх каҫӗсем пирӗн ӳсӗмри ҫыравҫӑсемшӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнӑ. Ҫамрӑксене вӑл чӗлхе илемне туйма, сӑнарлӑ шухӑш ӳкерчӗкне тупма пулӑшатчӗ...

# АЛЕКСАНДР АЛКА АСРАХ



**Сăн ӳкерчĕкре /сулахайран сылтăмалла/: А.Алка, Уйăп Мишши, Н.Данилов, ун умĕнче – ывăлĕ, Гурий Кузьмин /Çеçпĕл Мишши шăллĕ/, Г.Ефимов, Илпек Микулайĕ. 1968 çул.**

Унпа çӳренĕ эпĕ тăванла,
Калассине калонă пытармасăр.
Хайне тыткаламасчĕ паттăрла, –
Çавах вут-çулăмра вăл пулнă харсăр.

Сапер вăл пулнă. Саперсем пĕрре,
Кун-çулĕнче пĕрремĕш йăнăшаççĕ.
Анчах чул пек хытса ларман чĕре, –
Ачаш та çирĕп сăвăсем çыраççĕ.

Çырмаллисем нумайччĕ. Яланах
Вăл кăмăлпа ĕмĕтленсе çӳретчĕ.
Ĕмĕрĕнче усал сунман çынна,
Пурăнăçра ыррине çеç кĕтетчĕ.

Мĕн-ма ĕмри кĕске-ши талантсен?
Çĕклемĕ питĕ йывăр çав вĕсен.

**Георгий ЕФИМОВ,**
**Чăваш халăх поэчĕ.**

Юлашки çулсенче Хĕвеланăç Европăри поэтсене – французсемпе акăлчансен классикĕсене нумай куçарма тиврĕ. Ку вăл ют çĕршыв ăсчахĕсен пултарулăхĕпе ăмăртса ĕçленĕ пек пулса тухрĕ. Сăмахран, Францин тĕлĕнтермĕш поэчĕ – Артюр Рембо вăрçă çинчен çырнă «Усал вăй» сюжетне çеç чăвашла вуласа пăхар-ха. Хăрушă вăрçăн сăнсăр ӳкерчĕкне акă мĕнле сăнарласа кăтартнă вăл:

Мăн тупăсем хăсса кăларнă хĕрлĕ хăсăк
Çĕр пичĕ тăрăх шăхăрса вĕçет те...
чун чĕтрет
Король-кĕтӳç «сурăхсене» хăвалани
пит кăсăк –
полк хыççăн полк, взвод хыççăн взвод
хаяр вăрçа кĕрет.
Арманăн йывăр чулĕпе çынсен ĕречĕ мелсĕр
Çавăрăнса та вăранса куçнишĕн тислĕке,
Сан шухăшсăр лăпкăлăху ма,
çутçанталăк, шелсĕр?
Шур чечексен сулхăнĕнче – мĕн чул вил кĕлетке?

Çакна каласа хăварам: ку йĕркесене Франци поэчĕ 19-мĕш ĕмĕрĕн юлашки теçеткисенче пулса иртнĕ вăрçа сăнласа кăтартнă-çке! Апла пулин те поэт çырса хăварнă «Усал вăй» сонет йĕркисене çӳçенмесĕр вуласа иртме май çук. Ун чухнехи хĕç-пăшал – тем тесен те! – çирĕмĕш ĕмĕр пуçламăшĕнчипе те, каярахри çулсенчипе те танлашма пултарайман ĕнтĕ. Акă епле çырса кăтартать Александр Алка поэт тата салтак вăрçăн хура сăн-сăпатне «Аманнисене курсан» сăввинче:

Вĕсем выртаççĕ урапа çинче –
Тумтирĕсем тăпраллă, юнлă.
Кăн-кăвакарнă пичĕсем çинче
Хура куçхупаххи çеç юлнă.
Вĕсем сывлаççĕ илтĕнми йăваш;
Чун тӳсейми тăвăрлансассăн,
Ыратнине пăхмасăр, йăнăшсах
Пĕр сывласа илеççĕ ассăн.

Алка салтак, Алка поэт хăйĕн шăпи çинчен те шухăшласа илет:

Ак, эпĕ те çапла паян–ыран
Пĕр урапа çинче–и выртăп,
Ыратнине чарас тесе аран,
Хам тутана çиленнĕн çыртăп.

Анчах ахăрса кайнă вăрçă çулăмне чарса лартас тесен вăйпа тӳсемлĕх те кирлĕ иккен салтака. Икĕ вăй, икĕ шелсĕр вăй – пĕри фашистла Германи, тепри – советлă Руç – тĕнче шăпине татса панă пекех çапăçнине эпир, вăрçă умĕн çуралнă ача-пăча, чунпа та сывлăхпа курса-туйса ӳснĕ, выçлăхне те шиклĕхне те пĕлсе-туйса тăнă. Тĕнче шăпи, паллах, Раççей салтакĕсен ыра чун-хавалĕпе, паттăрлăхĕпе упранса юлчĕ. Кун çинчен нумайăшĕ пĕлет, анчах нумай-

ăшĕ манма тăрăшать, сутăнчăклă чунпа сĕмсĕрленсе çÿрет

Эппин, пĕр хыпнă çулăм, ялкăш, чун!
Хĕрÿллĕ пулччăр тÿсĕмлĕ кунсемĕр.
Эппин, вилĕме – вилĕм, юна – юн!
Хĕçе хĕçпе хуçар, атьсемĕр!

Юлашки йĕркене вуласа пăхар-ха тепре: «Хĕçе хĕçпе хуçар, атьсемĕр», – тет поэт. Çак витĕмлĕ йĕркепе ун чухнехи пĕтĕм халăх шухăш-кăмăлне уçса памасть-и вара вăрçă салтакĕ – Алка поэт? Сăввине те вăл пĕр-пĕр хăтлă кану çуртĕнче мар, салтаксен пĕр-пĕр çĕр пÿртĕнче /землянкăра/ 1941 çулта çырнă.

Акăлчан сăвăçи тата калавçи Редьярд Киплинг, хăй те салтак пулнăскер, вăрçăн урмăш сăн-сăпатне чылай сăввисенче сăнласа кăтартнă. Хăш-пĕр вăхăтра ăна совет пичетĕнче «империализм юрăçи», «колониализм тарçи» тесе те питлетчĕç идеологи надзирателĕсем. Ача-пăча литературинче те «Маугли» çырса тĕнчипе чапа тухнă писателĕн ĕçне «йÿнетес» текенсем хăйсемех ятсăрсумсăр çухалчĕç пулас. Юлашки çулсенче эпĕ Р.Киплингăн хăш-пĕр сăввисене чăвашла куçарса пăхрăм. Уйрăмах «Тусан» ятлă сăвви илĕртрĕ мана. Ăна акăлчан поэчĕ салтаксем харăс-харăс утса пынă пек кĕвелесе çырнă. Кăткăс та явапла ĕç вăл куçару – чăвашла курăмпа кĕвелесе парас тесен оригинала тивĕçтерекен кĕвĕлĕх тата сăнарлăх шыраса тупмалла-çке-ха! Акă вĕсем – «Тусан» сăвăри хăш-пĕр йĕркесем:

Вăр! – вăр! – вăр!..
Вăр! – вăр! – вăр!..
Çаврăнать тусан.
Тăлт! та тăлт!
Тăлт! та тăлт! –
Сас парса утатпăр.
Ир те каç,
Ир те каç
Вăрçăпа чупатпăр –
Улăха тухман.
Утса тухнă çухрăмсем те
Çухăраççĕ хыçалта.
«Çухрăм шучĕ маншăн пĕтрĕ» –
Тет ÿпне вартан салтак.

Александр Алка çырнă «Ырă ят» сăввинчи йĕркесем те вăрçăри çухату çинчен куçа курăнмалла, яланлăха асра юлмалла янăраççĕ.

Çĕрлехи çапăçу чакаланă сăрта
Шăратса çутатать ирхи ылтăн.
Ешĕл, сулхăн варта çамрăк паттăр выртать –
Пăшалне чăмăртанă вăл хыттăн.

*1942 çул.*

Çапла вара икĕ поэт – пĕри Р.Киплинг акăлчан, тепри А.Алка чăваш – вăрçă инкекне эрешлемесĕр, хитрелетмесĕр сăнарласа кăтартаççĕ, çынсене хурлăхпа асап çинчен асăрхаттараççĕ. Анчах вăрçă çулăмĕнче ĕнсеçунса тата тĕрлĕ вилĕм чăваш ялĕнчи савнисĕр юлнă хурлăхлă чăваш хĕрĕсене те манса каймасть.

Кайăксем шап-шурă улмуççи çинче
Шăратаççĕ Юрă юрату çинчен...
Анчах ешĕл улăх кĕçĕр лăпкă мар,
Çуталмасть сар уйăх – ялкăшать кăвар.
Çил-тăвăл тустарнă улмуççи çинчен
Кайăксем те тарнă. Хăй ларать
пĕччен.
Йĕкĕтсем пĕр шутлăн, харăссăн тăрса,
Халь кĕреççĕ вутлă, çулăмлă вăрçа...
Урама Çу каçĕ сулхăн ÿкерсен,
Тунсăхлăн юрлаççĕ пĕчченçи хĕрсем;
Хĕвелпе тухаççĕ, сарлака хире
Анăça пăхаççĕ, асăнса пире.

*/«Вăшăл-вăшăл улăх шухăша кÿлет» сăвăран илнĕ йĕркесем./*

«Куç мар, вичкĕн чун çеç халь витĕр курать», – тесе çырать А.Алка пĕр сăввинче. «Хăюлăх» ятлă тепĕр сăввинче вилĕм сапалакан çар хĕç-пăшалне – пулемета акă епле сăнарласа парать поэт:

Леш сăрт çамкинчен вĕрме тытăнчĕ «йытă»,
Çăварĕ вучах пек, сасси чул пек хытă.

Кунта çынна вилĕм кÿрекен хĕç-пăшала – пулемета ода хайламасть автор. Эпĕ тепĕр хут «Хăрушлăхпа хаярлăх» сăвăри витĕмлĕ те кĕвĕллĕ йĕркесене илсе кăтартасшăн:

Ула уй-хирте урлă тупă улать,
Уяр тÿпере çухăрать хурçă кайăк.

«У,ÿ» сасăсемпе епле ĕненÿллĕ те курăмлă йĕркесем çырма пултарнă автор. Ку вăл – ăсталăх! Анчах çак йĕркесем хыççăн вара шухăшлавлă, эмоциллĕ, пăшăрхануллă тата кÿренÿллĕ йĕркесем малтанхи икĕ шелсĕр йĕркен пĕлтерĕшне ăнлантарса парса чуна çемçетеççĕ, вăрçă епле хаяр та шелсĕр

пулнине тата мĕнешкел çухатуллă пулнине ĕнентереççĕ.

Эпир юратса тăнă лăпкă хула
Вутра ялкăшать-çке. Мĕнре-ши ун айăп?

Айăпĕ, паллах, тĕрлĕ йĕксĕк идеологипе минресе кайнă политиксен ăс-пуççăр та авантюрăллă ĕçĕнче. Ара, Гитлерĕн çын çиенле политики иккĕмĕш тĕнче вăрçинче мĕн чухлĕ çĕршыва тата халăха епле хĕн-хур кăтартни çинчен ачаран тӳссе-пĕлсе ӳсрĕмĕр-çке эпир. Анчах нимĕçсен те, вырăсăн та е урăх наци çыннисемшĕн те çăлăнăç çук иккен «Вăрçă туррин симфонийĕ» кĕрлеме тытăнсан:

...Тăрать вăл, пуç каснă пек,
юнлă хир тăрăх,
Исленнĕ тути пуплешет: Main Cot!
Шартлатрĕ самант! Шухăшла ĕнтĕ, тарăх –
Ăçта мĕскĕн пуçăм? Ăçта манăн... кут?!

Чăнах та ĕнтĕ 1947 çулта пичетленнĕ «Тăвата çулталăк» ятлă кĕнекере çакнашкал йĕркесем кун çути курни хăех шухăшлаттармалла. Ара, ку вĕт Сталин саманинчи çав тери çивĕч цензурăллă вăхăта пăхăнмасăр çырнă йĕркесем-çке! Ытларах суя патриотизмпа киленсе çыракан сăвăçсен йышĕнче ку йĕркесем шиклĕ шухăш кăна çуратма пултарнă. Апла пулин те вăрçă чăнлăхĕ асăрхаттаруллăн та витĕмлĕн тухса тăрать куç умне. Çапла вара хăш-пĕр тишкĕрӳçĕсем тата критиксем Александр Алка совет саманине юравлă пурăнса юравлă сăвăсем çеç çырма пултарнă тесе хаклани тата унăн пултарулăхне пачах та сума суманни нумай ăсчахсене шухăшлаттармалла.

Алка салтак, Алка поэт – хăйĕн ĕмĕрĕн çынни тата урмăш куçлă эпохăн гражданинĕ – вăрçă витĕр тухнă çын епле улшăнса пынине те асăрхать, вилĕмпе пурнăç тытăçăвĕ çынна епле улăштарса яни çинчен те витĕмлĕ сăмахпа кăтартса парать:

Пĕрре, тискер çапăçуран тухсан,
Эп тĕкĕр витĕр пăхрăм та хама,
Тĕлĕннипе-çке, пуçăма ухса,
Вăрттăн ас илтĕм çамрăклăхăма...
Йăлтах вăл улшăннă... Ĕлĕк чухне
Çăмăл-телейлĕн çиçекен куçсем
Халь пурнăç анăçне, хăюлăхне
Хаяр-салхуллăн тинкереççĕ тем.

Çапла вара этем психологийĕ, чăваш çыннин, чăваш салтакĕн хурлăхлă-тӳсĕмлĕ шухăш-кăмăлĕ яр уççăн тухса тăрса пирĕн шухăш-кăмăла та çавăрса-улăштарса ярать. Пурнăç çине чăнлăх куçĕпе пăхма вĕренетĕн çакнашкал йĕркесене вуласан. Пирĕн нумай тĕпчевçĕ пур, ăслăлăх çыннисем те, ăсчахĕсем те пĕве умне капланса тăнă тĕрлĕ хăрăк-турат пекех йышлă. Анчах халиччен те тăван литературăн, тăван сăмахăн, тĕрлĕ тапхăрти ӳсĕмĕн пĕлтерĕшне анлăн çутатса паракан статьясем, тĕпчевлĕ ĕçсем çав тери сахал.

Александр Алка культурăлăхне тĕплĕн тишкерсе çырнă тĕпчевлĕ ĕçсем те çукпа пĕрех. Декларативлă, пушă сăмахлă, типĕ тусан витнĕ тĕрлĕ тĕпчевçĕсĕр ĕçсем туллиех-ха. Анчах çав шухăшсăр айван çырулăхра Александр Алка сăнарĕ çук. Поэт сăнарĕ те çук вĕсенче. Алка поэт çамрăк ӳсĕмпе епле ĕçлени çинчен те асилӳ-тĕрленчĕксем çукпа пĕрех.

1974 çул... Ака уйăхĕ... Поэзи секцийĕ манăн «Хĕвел вăййи» ятлă сонетсен пуххине пăхса тухать. Александр Алка çапла тухса каларĕ: «Çамрăк ӳсĕм вăй илсе пырать. Нумаях пулмасть хаçатра Николай Теветкел сăввипе паллашрăм. Килĕшрĕ вăл мана. Эсĕ, Теветкел, малашне те Теветкел пул». Аслă ăрăвăн витĕмлĕ юрăçи çапла калани мана çав тери хавхалантарчĕ. Паллă чăваш поэчĕ, витĕмлĕ сăмах ăсти чĕлхе тирпейлĕхне, сăвă виçин çĕнелĕхне юрататчĕ...

Александр Алка çырнă «Шыв арманĕ» ятлă сăвăлла легенда вара пĕрремĕш чăваш оперине лартма хавхалантарчĕ. Ку çеç мар. Александр Алка иртсе кайнă вăрçă çинчен повеçсемпе романсем те çырса хăварчĕ. Вĕсем пирĕн вăхăтри вулакансемшĕн кăмăл турамĕ пекех пулчĕç. Анчах 70-мĕш çулсенче хăшĕ-пĕри «Алка поэт мар, унăн пултарулăхĕ шĕвĕ» текелеме те хăтланчĕ. Анчах çак пултаруллă поэта вăтăрмĕш çулсенче «Хусанкай хӳрешки» тесе айăплама хăтланнине те манса кая марччĕ. Алка салтак, Алка поэт тăван литературăна пушă алпа килмен.

Сулсем çинче вĕçĕ-хĕррисĕр çар...
Сулсем, çулсем! Епле тӳссе вырт аççĕ.
Сил хăвалать анăçалла вăрса,
Хирсем васкавлăн пуç тайса юлаççĕ.

Çапăçу хирĕпе утса тухнă Чăваш халăх поэчĕ Александр Алка ячĕ пултарулăх çыннисене паян та хавхалантармалла. Çырулăхра вăл тулăх ана хăварнă.

**Николай ТЕВЕТКЕЛ.**